Тăвай районěн хаçачě

# ЯЛ ĚÇЧЕНĚ

1935 çулхи февралěн 17-мěшěнче тухма пуçланă

2024 çул

Чӳк (Ноябрь), 15

ЭРНЕКУН

44/10734/№

Хакě ирěклě

## Пуçаруллă ěçсем вăй илеççě

**Социаллă пурнăçпа экономика аталанăвě пурнăçа малашлăх витěм кӳрет, унăн пахалăхне çӳллěрен çӳллě шая хăпартса пыма май парать. Аталану çул-йěрěнчен пăрăнмасăр ку чухнехи техникăпа тата технологисемпе, кашни тенкěпе тухăçлă усă курни, пěрлехи тата харпăр хăй ěçне инвестици хывни, палăртнă тěллевсене пурнăça кěртсе пыни, çанă тавăрса ěçлени малаллах кайма пулăшать.**




Çак ěçе вак тата вăтам предпринимательлěх субъекчěсем те пысăк тӳпе хываççě. Вěсем хăйсен аталанăвне вăйлатсах пыраççě, тивěçлě техникăпа оборудовани туянаççě, производствăна сарса пыма, калăпăшне ӳстерме тимлеççě. Вак тата вăтам предпринимательсен йышě пуçаруллă та пултаруллă çынсемпе хушăнсах пырать. Вěсем халăх хуçалăхěн, экономикăн тěрлě сферине сумлă витěм кӳреççě. Илěпěр, тěслěхрен, Вырăс Нăрваш салинчи пулă ěрчетекен Е.Г.Новиков хуçалăхнех. Халиччен пирěн округра пулă ферми пулман вěт-ха. Халě – пур, ăркай (форель) ěрчет унта. Чи пěлтерěшли – инвестицисем хывса, пулă производствине малалла сарса пыма вăй хурать Евгений Геннадьевич: кăçалхи декабрьте тирпейлекен цеха хута ярса пулă консервисем кăларма тытăнасшăн. Кирлě оборудование туяннă терěç, ăна вырнаçтарса производствăна хута ярěç. «Перспектива» гранта çěнсе илни те пулăшнă, паллах.

Андрей Моряков акă йывăр туртакан ăратлă лашасем ăнăçлă ěрчетет. Çулласенче унăн уйра çӳрекен пысăк ут кěтěвне курса чăннипех те мăнаçланатăн. Вăлах лаша ашěнчен продукци кăларассине те йěркеленě.

Качака сěчě, сыр, çырла туса илекенсем те пур халě округри ялсенче. Вěсем пурте хăйсен продукцине сутаççě, халăха тивěçтереççě е курттăммăн та ăсатаççě. Лайăх йěркеленě кирек епле производство та экономикăна, пурнăç шайне çěклет. Округри предпринимательсем тěрлě конкурссемпе выставкăсене хутшăнаççě, хăйсене лайăх енчен кăтартаççě, малти вырăнсене те йышăнаççě. Чи кирли – вěсен пуçаруллă ěçě халăхшăн та, çěршывшăн та усăллă пулни. Хăйсен ěçне, бизнесне вăйлатса, сарса пырса, сěт, ытти юр-вар туса илессипе те пуçарулăх кăтартать чылайăшě. Сăмахран, республикăри хресчен-фермер хуçалăхěсем хушшинче чи лайăх производствăпа экономика кăтартăвěсемшěн Тушкилти Сергей Илларионов хуçалăхě иккěмěш вырăна тивěçнě. Валентин Грачев хуçалăхě çу юхтаракан культурăсене пысăк лаптăкра туса илме тытăннă тата ытти те.

**Иван ГЛАДКОВ**

ЯЛ ХУÇАЛĂХĚ

## Кăтартусене лайăхлатса

**Тăвай округ администрацийěн ял хуçалăхěпе экологи пайěн специалисчěсем выльăхсене хěл каçарасси мěнле пынипе кăсăкланса «Дружба» ял хуçалăх кооперативěн тата С.К.Муханов хресчен-фермер хуçалăхěн фермисенче пулчěç.**

Хăйсем епле ěçленипе Кěршери «Дружба» ЯХПК председателě Иван Зубов паллаштарчě. Кунти фермăра паянхи кун 407 пуç мăйракаллă шултра выльăх усраççě, çак шутран 126 пуçě – сăвакан ěнесем. Вунă уйăхра пурě 144 пăру пăхса илнě, вěсене хуçалăхра çитěнтереççě. «Вăкăрсене ашлăх самăртатпăр, тынасене кěтěве çěнетме тата ытти хуçалăхсене сутмалăх ӳстеретпěр. Контрольлě сăвăм кăтартăвěсем тăрăх, сěт кěтěвне çуллен вăтăр процент таран çěнететпěр. Кăçал çирěм пуç ытла пěтě пушмака хамăр округри хуçалăхсене сутрăмăр. Пěлтěр эпир пěтěмпе 908,7 тонна сěт туса илнě, кашни ěне вăтамран 7212 килограмм продукци pană. Кăçал асăннă кăтартусене 5 процент ирттерсе пурнăçлама тăрăшатпăр»,– терě Иван Васильевич.

Хуçалăх хěле тěплě хатěрленнě – 709 тонна утă янтăласа хунă, 2500 тонна сенаж хывнă. Тырă фуражěпе те туллин тивěçтернě. Выльăхсене тăрантарассине кирлě пек йěркеленě, вěсем лайăх ӳтлě.

Сергей Муханов фермер хуçалăхěнче те выльăхсене пăхса тата тăрантарса усрассине начар мар йěркеленě. Ěнесем тутă. Хěл каçма хатěрлесе хунă нумай çул ӳсекен курăксен ути лайăх пахалăхлă.

«Дружба» ЯХПКпа С.К.Муханов хресчен-фермер хуçалăхěшěн хěллехи тапхăрта выльăх-чěрлěхрен ытларах продукци илесси малти планра тăрать, мěншěн тесен ку вăхăтра вěсемшěн тěп тупăш çăлкуçě пулса тăрать»,– палăртрě фермăсенче пулнин итогěсене пěтěмлетсе ял хуçалăхěпе экологи пайěн начальникě Николай Краснов.

**Надежда НИКИФОРОВА,**
**ял хуçалăхěпе экологи пайěн тěп специалист-эксперчě**

## Кун-çулě те, ěçě те сулмаклă

**Кăçал Раççей Перекет банкě 183 çул тултарчě. Çак сумлă та вăрăм кун-çул тăршшěнче вăл халăхшăн, çěршыв экономикишěн пěлтерěшлě нумай ěçе, проекта пурнăça кěртнě, малалла аталанма пулăшнă. Çаксене тěпе хурса Перекет банкěн кунě ячěпе хамăр банкра ěçлекенсене тата тивěçлě канăва тухнисене, мěнпур клиента ăшшăн саламласа ырă сунатăп, малашне те пěр-пěрне ăнланса тата пулăшса ěçлессе шанса тăратăп. Мěншěн тесен çак вăрăм тапхăрта та банкăн тěп ěçě – халăхăн укçи-тенкине шанчăклă сыхласа упрасси тата хушса пырасси – ылмашăнман.**

Унсăр пуçне хальхи пурнăçра клиентсене нумай çěнě продуктсем сěнетпěр, пур енлě пулăшма тăрăшатпăр. Çав вăхăтрах ултавçăсемпе кěрешес ěçре те нумай тимлетпěр. Паянхи кун Раççей Перекет банкěн Тăвайри филиалěнче пилěк çын ěçлет – Александр Краснов, Елена Сергеева, Надежда Сидорова, Екатерина Саперова, Вера Дмитриева. Вěсем пурте хăйсен ěçне чунтан парăннă ěçченсем, нумайăшě пěр вырăнта вуншар çул тăрăшать. Тивěçлě канăва тухнă Надежда Морозова 39 çул вăй хучě пирěн банкра.



Хальхи вăхăтра филиалта юсав ěçěсем вěçленсе пыраççě. Çакă та кунта ěçлекенсемпе клиентсен условийěсене малалла лайăхлатма пулăшě.

**Александр КРАСНОВ,**
**Тăвайри филиал ертӳçи**

## Амалăхри ФАПра пулнă

**Тăвай муниципалитет округěн пуçлăхě Олег Ломоносов Амалăхри фельдшерпа акушер пунктěнче пулнă. Медицина учрежденийěн ěçě çинчен Канашри территорисем хушшинчи медицина центрěн тěп врачě Рената Федорова тěплěн каласа панă.**

Вăл çакна палăртнă: асăннă учреждение халăха пěрремěш тапхăрта диспансеризаци тума кирлě оборудованипе тивěçтернě. Олег Анатольевич тата Тěмер территори уйрăмěн начальникě Геннадий Иванов медицина аппарачěсем пулăшнипе юнри сахăр шайне тěрěсленě.

«Паянхи кун тěлне асăннă фельдшерпа акушер пункчě аслă ӳсěмри халăха диспансеризаци тумалли плана 100 процентчěпех пурнăçланă теме пулать. Ку вара «Сывлăх сыхлавě» наци проекчěн тěп задачисенчен пěри. Çакă вăл чир-чěре тата вěсене аталанма пулăшакан сăлтавсене маларах тупса палăртма май парать. Паянхи кун ялсенче пурăнакан кашни çын вăхăтра медицина пулăшăвě илме тата профилактика мероприятийěсем ирттерме пултарать. Çакна вырăнта пурнăçлама фельдшерпа акушер пункчěсем пулăшаççě»,– палăртнă Рената Федорова тěп врач.

Амалăхра фельдшерпа акушер пункчěн çěнě çуртне 2015 çулта хута янă. Кунта Амалăх ялěнчи 200 ытла çын медицина пулăшăвě илет. Пациентсене çак ěçре халăх сывлăхěшěн 30 çул ытла тăрăшакан ăшă кăмăллă та опытлă фельдшер – ФАП заведующийě Альбина Васильевна Матвеева йышăнать тата тивěçлě пулăшу парать.




### ÇЫРĂНТАРУ МАЛАЛЛА ПЫРАТЬ

**Тăвай тăрăхěн хаçачě, пирěн юратнă «Ял ěçченě», 1935 çулхи нарăс уйăхěнче тухма тытăннă та пирěн округ историне, кун-çулне тěпě-йěрěпе палăртса, тěпчесе пырать. Хамăр тăрăх мěнпе пурăннине, сывланине, кунти çěнěлěхсене тата кунти тěп пулăмсене пуринчен малтан пěлтерсе тăрать паянхи кун та.**

**Ниěнле хаçат та вулакансăр пулмасть, пирěн ентешсем вара ку енчен уйрăмах хастар иккенне палăртас килет. Эсир ăсатакан çырусем, сирěн сěнӳсемпе канашсем пирěн юратнă хаçата тата чěрěрех, хитререх тата пуянрах тăваççě. Хыпар ярсах тăрăр, эпир ялан хапăл. Тăвай тăрăхěнчи кашни килтех «Ял ěçченě» хаçат пулмаллах, çавăнпа эпир сире çырăнтару малалла пынине аса илтеретпěр. 2025 çулхи пěрремěш çур çулшăн альтернативлă майпа çырăнмалли хак – 360 тенкě, почта урлă – 675 тенкě те 96 пус.**

АПК ВЕТЕРАНĔСЕМ

# Вăрăм ĕмĕр сунчĕҫ

**АПК ветеранĕсен округри уйрăмĕн членĕсем ҫак кунсенче хăйсен ĕçтешне – Петр Михайлович Якимова пурнăçĕнчи паллă кунпа – ҫуралнăранпа 70 ҫул тултарнипе саламларĕҫ. Юбиляр 1954 ҫулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнче Лачкасси ялĕнчи йышлă ҫемьере ҫуралнă. Ашшĕ-амăшĕ ачисене тăрăшса вĕренме, ĕçе юратма, пĕр-пĕрне хисеплеме хăнăхтарса ӳстернĕ. Вăл вăхăтри яшсем пекех, Петр та вăтам шкула ăнăçлă пĕтернĕ, Совет ҫарĕнче службăра тăнă. Каярахпа Шупашкарти энерготехникумра вĕренсе хăй килĕшекен специальноҫа алла илнĕ.**

Петр Михайловичăн ĕç кĕнекинче ҫырнисем ытларах ĕçшĕн хавхалантарнипе ҫыхăннă. П.Якимов вунă ҫул ытла районти «Мир» комплексра тĕп энергетикре тăрăшнă. Предприяти хупăнсанах ăста специалиста Тăвайри сĕт-ҫу заводне ĕçне илеççĕ. Кунта пĕр улшăнмасăр ҫирĕм ҫул ытла тĕп инженерта вăй хунă. Электроэнергипе, тĕрлĕ механизмсемпе ҫыхăннă ĕç кăткăс та яваплă пулнине ĕненетерме те кирлĕ мар. Петр Михайловичăн производство хăвачĕсене тĕрĕс-тĕкел, шанчăклă ĕçлеттерес енĕпе нумай вăй хума тивни каламасăрах паллă. Кирек хăш коллективра та ĕçтешĕсем сăпайлă, тӳрĕ кăмăллăскере хисепленĕ, тивĕçлипе хакланă.

П.М.Якимов ҫемйипе Тăвай ялĕнче хăйсем ҫĕкленĕ кермен ҫуртра пурăнать. Мăшăрĕпе, вăрах вăхăт район центрĕнчи тĕп аптекăра ертӳçĕре тăрăшнă Нина Николаевнăпа икĕ ывăл ҫитĕнтернĕ. Хăйсем пекех, тĕпренчĕкĕсене те сапăр, ĕçчен пулма вĕрентнĕ. Халĕ хисеплĕ мăшăр виçĕ мăнукне ура ҫине тăратма пулăшать.

Пушă вăхăтра, кил-хуҫалăхра ĕçленисĕр пуçне, Петр Михайлович ухатана тата пулла ҫӳреме юратать. «Ҫут ҫанталăк ытамĕнче пулни кăмăла ҫĕклет, пурăнма вăйхал кӳрет»,– тет юбиляр.



АПК ветеранĕсен республикăри Союзĕн правленийĕ П.М.Якимова Тав ҫырăвĕпе тата асра юлмалли парнепе хавхалантарнă. Вырăнти уйрăм та айккинче юлман, паллах. Округри уйрăма ертсе пыракан Н.И.Иванов, нумай ҫул пĕрле ĕçленĕ юлташĕсем – М.Я.Яковлев, Н.П.Смирнов, Г.И.Сергеев, юбиляра саламласа ҫирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр тата хавхаланупа вăйхăват сунчĕҫ.

**Людмила ПАВЛОВА,**
**АПК уйрăмĕн членĕ**

# Пирĕн ентеш те хутшăннă

**Ҫак эрне пуҫламăшĕнче Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думинче ятарлă ҫар операцине хутшăнакансемпе вĕсен ачисене вĕренӳ квотипе тата ҫăмăллăхсемпе тивĕçтерекен 264-мĕш Федераци законĕпе малтанхи ҫул усă курнин итогĕсене сӳтсе явассипе тата улшăнусем кĕртессипе ҫавра сĕтел иртнĕ.**




Унта пирĕн ентеш Тăвай хĕрĕ, халĕ Мускавра пурăнакан Светлана Петровна Алексеева (Коваль), (**сăн ӳкерчĕкре сулахайран пĕрремĕшĕ**) та пулнă. Вăл хăй вăхăтĕнче ҫапăçусем пынă хĕрӳ вырăнсенче пулнă, аманнă салтаксен пурнăçне ҫăлса хăварма хутшăннă, патшалăхпа оборона министерствин наградисене тивĕçнĕ, хальхи вăхăтра Мускавра Н.Бурденко ячĕпе хисепленекен госпитальте тăрăшать.

**Иван ИВАНОВ**

2024 – ЭКОЛОГИ ҪУЛТАЛĂКĔ

# «Эколята» проектпа килĕшӳллĕн

**Экологи ҫулталăкĕ пулнă май, Чăваш енре ҫут ҫанталăка сыхлас ĕçе тимлĕх уйăраççĕ. Пирĕн шкулта та ҫак ĕç малалла аталанса пырать. Ҫак кунсенче питĕ пĕлтерĕшлĕ мероприяти иртрĕ. Пĕтĕм Раççейри «Эколята» проекта хутшăнса шкул ҫулне ҫитмен шăпăрлансене, пуçламăш тата аслă классенче вĕренекенсене «ҫут ҫанталăкăн ҫамрăк хӳтĕлевçисен» ретне илчĕҫ.**

Мероприяти вăхăтĕнче Умница, Шалун, Тихоня, Елочка хăнасем ачасемпе тĕрлĕ вăйăсем выляса вĕсен тавракурăмне тĕрĕслерĕҫ. Вăрманта, улăхра, юханшывсен хĕрринче хăрушсăрлăх йĕркисене пăхăнмаллине те манмарĕҫ. Хăнасен сăнарĕсене ăста выляканисем 5-мĕш класри вĕренекенсем пулчĕҫ.




Хăйсен пĕлĕвĕсемпе тĕлĕнтерчĕҫ ачасем.

«Эколята» ята илме тивĕçлĕ пулнине кăтартса пачĕҫ.

Юлашкинчен ҫут ҫанталăкăн ҫамрăк хӳтĕлевçисем тупа турĕҫ, гимн шăрантарчĕҫ. Ҫакăн пек мероприятисем ачасен ҫут ҫанталăка сыхлас туртăмне аталантарма пулăшаççĕ. Мероприятие хатĕрленĕ воспитательсене, класс ертӳçине тав сăмахĕ калас килет.

**Людмила МИХАЙЛОВА,**
**Елена ГАВРИЛОВА**

РЕСПУБЛИКĂРА, ОКРУГРА

• Чăваш Республикин 2025 ҫулхи, 2026 тата 2007 ҫулсенчи планпа пăхнă тапхăрти республика бюджечĕн проекчĕпе халăх итлевĕ ирттереççĕ. Вăл 2024 ҫулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнче 10 сехетре пуçланать, Правительство ҫурчĕн ларусен пысăк залĕнче (Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 17-мĕш ҫурт, 3-мĕш хут) иртет.

• Чăваш Енре вăрçă ачисем 42 пин патнелле. Аслă Ҫĕнтерĕвĕн 80 ҫулхи юбилейĕ тĕлне вĕсене пĕр хут паракан тӳлев пама палăртаççĕ.

• Юлашки ҫулсенче республика бюджечĕ пысăкланнă, ытти кăтарту та, ҫав шутра ĕç тухăçлăхĕпе ĕç укçи те ӳснĕ. Ҫитес бюджет кăçалхинчен те туллинрех пуласса шанаççĕ – хамăрăн тупăш самай пысăкланмалла, ҫĕнĕ майсем усăлĕҫ. Урăхла каласан, республика пурнăçне тивĕçтерекен тăкаксен пысăк пайне хамăрăн тупăш саплаштарĕ.

• Чăваш Енре юлашки вунă ҫулта апатҫимĕç продукцийĕ туса кăларасси икĕ хут ӳснĕ, тыр-пул тухăçĕ – 1,7, пахча ҫимĕç – 1,6, ҫĕрулми – 1,5 хут. Эпир хамăра пахча ҫимĕçпе, ҫĕр улмипе, аш-какайпа, сĕтпе туллин тивĕçтеретпĕр. Сĕте ĕçлесе тирпейлесси 60 процента ҫитнĕ.

• Вунă ҫул каялла республикăра пилĕк тĕрлĕ сыр кăларнă, халĕ – 90. Ҫак тапхăрта сыр кăларасси ултă хут ӳснĕ.

• Республикăн адреслă инвестици программине регион бюджетне иккĕмĕш хут пăхса тухнă хыççăн улшăнусем кĕртнĕ. 2024–2026 ҫулсем валли хатĕрленĕ инвестици программине ҫĕнĕ 72 мероприяти кĕнĕ, вĕсенчен 22-шĕ – проектпа смета докуменчĕсем хатĕрлесси, 50-шĕ – строительство.

• Чăваш Енре пурăнакансем Пĕтĕм Раççейри «Симĕс Зачет» экопĕлӳ конкурсне хутшăнма пултараççĕ. Экопĕлĕве тĕрĕслеме 8–11-мĕш классенче вĕренекенсене тата 1–2-мĕш курс студенчĕсене йыхравлаççĕ. Суйлав тестированийĕ онлайн мелĕпе ноябрĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 15-мĕшĕччен пырĕ. Вăл пурĕ 30 ыйтуран тăрать. Чи нумай балл пухакансем ҫитес ҫулхи февральте иртекен тупăшăва кĕрĕҫ.

• Халăха грипран, ытти ҫакнашкал инфекци чирĕсенчен хӳтĕлесси кĕркуннехи-хĕллехи тапхăрта ялан ҫивĕч. ОРВИпе чирленисен ҫурринчен ытларах пайĕ – ачасем. Ковид та манăçмасть – республикăра пĕр эрнере 78 ҫынна ернĕ. Пандеми пуҫланнăранпа вара коронавируспа чирленисен республикăри пĕтĕмĕшле шучĕ 127,2 пине яхăн ҫынпа танлашать. Хальхи вăхăтра ку чиртен 458 ҫын амбулатори мелĕпе сиплевет, 24 ҫын – стационарта.

Грипран сыхланса 494 пин ҫын прививка тутарнă, ҫак шутра 167 пине яхăн – ачасем. Анчах ҫакă ҫителĕксĕр.

• Январь–сентябрь уйăхĕсенче регионта ГТО нормативĕсене пама 23,7 пине яхăн ҫын хутшăннă, ку вăл иртнĕ ҫулхи ҫак тапхăртинчен 10,5 процент нумайрах. Рейтингра Етĕрне, Комсомольски, Тăвай округĕсем малта.

• Чăваш Ен территорийĕнче федераци, республика ҫулĕсен тата вырăнти ҫулсен тăршшĕ 12,8 пин километрпа танлашать. Вĕсене хĕллехи тапхăрта кирлĕ пек пăхса тăма техника ҫителĕклĕ пулнине палăртаççĕ, хăш ҫулсене камсем тасатса-пăхса тăрасси паллă, хăйăрпа тăвар хутăшĕ ҫителĕклĕ хатĕрленĕ. Ҫĕнĕ ҫултан пăрлак ҫулсене ирĕлтермешкĕн ҫĕнĕлĕхпе – таса хлоридпа та усă курма пуçласшăн.

• Кăҫалхи декабрĕн 6–10-мĕшĕсенче регион шайĕнче «Чăваш Республикинчи ялти чи лайăх староста» конкурс ҫĕнтерӳçисене пĕлтерĕҫ. Ăна ЧР Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕ ял старостисен чи лайăх проектне тупса палăртас тата сарас тĕллевпе йĕркелет, приз фонĕнче – 200 пин тенкĕ. Конкурс пуçланнă, муниципалитетсен тата регион шайĕнче иртет.

**Иван ГЛАДКОВ**
**хатĕрленĕ**

ÇЫН ТАТА САККУН

# Суд приставне – Тав çырăвĕ

**Ноябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче суд приставĕн ĕçченĕсене професси уявĕпе ЧР Пуçлăхĕ Олег Николаев саламланă. Общество килĕшĕвĕшĕн, граждансен прависене хӳтĕлес ĕçе пысăк тӳпе хывакансене тав тунă.**

**Суд приставĕн службинче тĕрлĕ парăмсене шыраса илесси малти вырăнта тăрать. Кăçал регионта ачасен уссишĕн парăмçăсенчен 520 млн ытла тенкĕ шыраса илнĕ, ку вăл иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 81 млн тенкĕ ытларах. Раççей Федерацийĕн бюджетне 378 млн ытла тенкĕ куçарнă, вĕсенчен 152 млн – республика бюджетне.**




2024 çул пуçланнăранпа айăпа кĕнисене пĕтĕмпе 3,5 млрд тенкĕне яхăн тӳлеттернĕ. Суд приставĕсем пурнăçламалли ĕçсем тăрăх 80 ытла тăлăх ачана пурăнмалли çурт-йĕр илме пулăшнă.

Кăçалхи 10 уйăх хушшинче Тăвайри суд приставĕн уйрăмĕн сотрудникĕсем 2 млн та 500 пин тенкĕ ытла шыраса илсе бюджет тытăмне хывнă (административлă штрафсем – 734 пин, уголовлă штрафсем – 50 пин тенкĕ, ыттисем – налуксемпе тĕрлĕ сборсемшĕн).

Суд приставĕсен профессии уявĕнче служба ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн управленин чи лайăх ĕçченĕсене ведомствăра республика наградисемпе хавхалантарнă. Тăвай уйрăмĕнчи суд приставĕ Иван Иванов нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн Леонид Черкесовăн Тав çăмахне тивĕçнĕ.

Чĕрĕк ĕмĕр ытла тăрăшать вăл правăна çирĕплетес ĕç тытăмĕнче. 2007 çулта Чулхулари МВД академийĕн Шупашкарти филиалĕнче вĕреннĕ хыççăн çак служба ĕçне пуçăннă. Коллективра 10 çын вăй хурать, уйрăм начальникĕнче А.Р.Васильев, суд приставĕн исполнителĕнче Л.Ю.Белоусова тăрăшнине пĕлтерчĕ Иван Петрович. Н.В.Сергеев, Д.В.Евставьев, А.Ю.Андреев, С.В.Тимофеев суд приставĕсене, Т.В.Андреева специалиста, Э.А.Федоров водителе ырăпа асăнчĕ.

**Раиса ШУМОВА**

ЭКОЛОГИ

# Хăтлă тата кăмăллă

**Çăлкуçсене пирĕн округри ялсемпе вĕсен таврашĕнче те тасатса типтерлеççĕ-ха, хăтлăх кӳреççĕ, вĕсем патне пырса çӳреме илĕртӳллĕ тăваççĕ. «Хура çăл çăлкуçĕсем» вырăн хăех мĕне тăрать. «Шупашкар ГЭСĕ» филиалĕн представителĕсем, волонтерсем, çут çанталăк тусĕсем хăтлăлатнă хыççăн кунта экологи фестивалĕсем те иртрĕç ĕнтĕ, çĕр-çĕр çынна пухрĕç, çăлкуçсене тасатса типтерленин усси куç умне тухрĕ. Ялсенче çăлкуçсене пуçару бюджечĕн программипе усă курса та çĕнĕ хăват кӳреççĕ, пĕвесене те тарăнлатса йĕркене кĕртеççĕ.**

Иртнĕ кунсенче Шупашкар округĕнчи Явăш ялĕн çăл куçне хăтлăлатнă хыççăн ăна савăнăçлă пуху ирттерсех уçнине вуласа пĕлтĕм. Ку проекта «Вырăс географи обществин çăл куçĕсем» программăпа килĕшӳллĕн Россельхозбанкăн «Экологи» фончĕ пулăшнипе пурнăçланă иккен. Пухăва Шупашкар округĕн пуçлăхĕ Владимир Михайлов, çут çанталăк ресурсĕсен министрĕн çумĕ Николай Охотин, Россельхозбанкăн Чăваш филиалĕн директорĕ Ирина Письменская, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Владимир Викторов, обществăн ĕç тăвакан дирекцийĕн канашçи Полина Романова, фонд директорĕ Эльмира Морозова хутшăннă. Шупашкар тата Ункă юхан шывĕсен таппинче вырнаçнă Явăш çăл куçне хăтлăх кӳни çинчен «Экологи» фончĕн «Çăлкуçсене упраса хăвар» ятлă сертификатне туянниcене те пĕлтерĕç. Вĕсен йышĕнче – çăл куçсене хӳтĕлессипе тата пăхса тăрассипе çыхăннă проектсене пурнăçлама харпăр хăй укçине хывнă çĕр-çĕр çын. «Шывĕ питĕ тутлă!»,– тенĕ пухăва хутшăннисем. Çăлкуçĕ вара çут çанталăка та, çынсене те питĕ кирлĕ.

**Иван ГЛАДКОВ**

# Çамрăксемшĕн пĕлтерĕшлĕ

**Шалти ĕçсен органĕсен ĕçченĕн кунĕнче çак тытăмри хисеплĕ ветерансем Тăвайри халăх музейне пухăннă. Владимир Федоров заведующи, хăй вăхăтĕнче ертӳçĕ çумĕнче ĕçленĕскер, музейри залсем тăрăх экскурси ирттернĕ, картинăсен куравĕсемпе, çĕршыв, тăван тăрăх историйĕпе çыхăннă экспонатсемпе паллаштарнă. Çар мухтавĕн залĕнче тĕрлĕ хирĕçтăрусенче, СВОра çар тивĕçне пурнăçласа пуç хунă ентешсене асăннă.**



Çавăн пекех Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче, правăпа саккунлăх хуралĕнче служба вăхăтĕнче пурнăçран уйрăлнисене пĕр минут шăп тăрса чысланă.

Тăвайри халăх музейĕнче районти шалти ĕçсен органĕн ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă информаципе паллашма та кăсăклă пулнă. Нумай çул общество йĕркине упрас тĕлĕшпе яваплăн ĕçлесе пурăннине аса илнĕ май, çулленех професси уявĕнче йышлăнрах пухăнма, 2025 çулхи Çĕнтерӳпе патриотизм çулталăкĕнче çамрăксене воспитани парассипе çыхăннă ĕç-хĕле палăртрĕç.

**Хамăр инф.**

ТĂВАЙ РАЙОНĔН 90 ÇУЛХИ ЮБИЛЕЙĔ УМĔН

# Тăван тăрăхпа паллашма



**П.Х.Бухтулов ячĕллĕ Тăвай шкулĕнчи 7 «В» класра 25 ача вĕренет. Вĕсене Кушкă, Вырăс сали, Тенеялĕ, Вăрманхĕрри, Улянкă, Йăнтăрчă ялĕсенчен шкул автобусĕпе илсе çӳреççĕ. 5-мĕш класран Наталия Владимировна Ефремова ертсе пырать. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче класс сехетĕнче Тăвай район историйĕпе паллашма кăмăл турĕç вĕренекенсем.**

Паллах, сăлтавĕ те пĕлтерĕшлĕ, 2025 çулта Тăвай районне туса хунăранпа 90 çул пулать. Хамăр тăрăхри ялсене, унта вырнаçнă тĕрлĕ сферăри ĕç-хĕл тытăмне, паллă çынсене пĕлмеллех çамрăксен. Тепĕр чухне ыйтсан, ялсен ячĕсене пĕлменни те тĕлĕнтерет.

Экскурсие пушар чаçĕнчен пуçларăмăр. Эпĕ те, 88 çулхи вăрçă ачи, вĕсемпе пĕрле пултăм. Коллективa 1998 çултанпа Николай Григорьевич Павлов ертсе пырать. Ĕлĕкхипе танлаштарсан, вут-çулăмпа кĕрешекенсен техника паркĕ нумай çĕнĕ оборудованипе пуянланнă. 4 КамАЗ кунта, кашни кун 2 машина, 4-шар çын дежурствăра. Ачасене пушар сӳнтернĕ чухне тăхăнакан тумтирсемпе, ĕçре усă куракан оборудованисемпе паллаштарчĕç. Инструкцисем валеçсе пачĕç, пушартан сыхланмалли çинчен ăнлантарчĕç. Ачасем кăсăкланса хатĕрсене тытса, тăхăнса, машин çине ларса пăхрĕç.

«Дежурство лăпкă иртĕр. Инкеклĕ шăнкăравсем ан пулччăр. Пушар сӳнтермелли оборудовани, машинăсем дежурствăра çеç хатĕр тăмалла пултăр»,– тесе уйрăлтăмăр «01» службăра тăрăшакансемпе.

**Елизавета ИЛЬИНА, кĕмĕл волонтер, ĕç ветеранĕ**

# МАНĂН ÇЕМЬЕ – МАНĂН ПУЯНЛĂХ

**Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçланать**

# Мишустин чысланă

**«Ĕçре темле пысăк çитĕнӳсем тусан та çемьепе пулнине мĕн çиттĕр? Вăл маншăн яланах шанчăклă тĕрек те хӳтлĕх. Савăнăçа пĕрле пайлакан та, йывăрлăхра пулăшакан та...»,– тет Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ учителĕ Елена Александровна Михайлова.**

### БИОГРАФИРЕН

*Елена Михайлова 1960 çулта Тенеялĕнче çуралнă. 1967–1971 çулсенче ялти пуçламăш, 1971–1975 çулсенче Йăнтăрчăри 8 çул вĕренмелли шкулсенче вĕреннĕ. 1975 çулта Канашри педучилищĕне вĕренме кĕрсе, пуçламăш классен учителĕн специальноçне, 1986 çулта И.Я.Яковлев ячĕллĕ педагогика институтĕнче математика учителĕн дипломне илнĕ. Педагогика ĕçне Йăнтăрчă шкулĕнче пуçланă. Канашри 10-мĕш, Шупашкарти 24-мĕш шкулсенче математика вĕрентнĕ. Юлашки 18 çулне Шупашкарти 44-мĕш лицейра вăй хурать.*

*Елена Александровна – Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ учителĕ. «Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ» ята, «Раççей Федерацийĕн вĕрентĕвĕн отличникĕ» паллăна тивĕç пулнă. Ăна Раççей Правительствин Хисеп грамотипе наградăланă.*

## «Аттепе анне пĕлӳ парассишĕн çуннă...»

**Елена пилĕк ачаллă çемьере çитĕннĕ. Ашшĕпе амăшĕ ачисене питĕ вĕрентесшĕн пулнă. Таисия Ивановна Йăнтăрчă ял Совечĕн специалисчĕнче ĕçленĕ. Ампар кĕнекисем çырма илсе килсен ачисене счетпа шутлаттарни хĕрача асĕнче юлнă. Александр Арсентьевич «Новый путь» колхозри ĕçсене хастар хутшăннă. Шашка-шахматла выляма юратнă, ачисен ăс-хакăлне аталантарса пыма вăйă урлă та витĕм кӳнĕ.**

Вĕсем темле ĕçлĕ пулсан та пурнăçпа тан утнă. Концертсенче юрланă, спектакльсенче вылянă. Виçĕ ывăлпа икĕ хĕртен Елена асли пулнă, ачаранах ĕçре пиçĕхсе ӳснĕ. Пĕчĕкренех вулама кăмăлланă. Пушă вăхăт тупăнсанах кĕнеке патне туртăннă. Шел те, ашшĕпе амăшĕ 50 çул урлă каçсанах çĕре кĕнĕ. «Пĕр-пĕрне пулăшса, пĕр-пĕриншĕн тĕрев пулса пурте вĕренсе тухрăмăр. Педагогика, медицина, çар тата право ĕçне суйларăмăр»,– терĕ Елена Александровна.



Таисия Ивановнапа Александр Арсентьевич

## Мария Егоровна учителе юратнипе

**«Наукăсен патши» тетпĕр математика пирки. «Учитель пулас ĕмĕт хăçан çуралнă? Мĕншĕн тата математика вĕрентекен?»– кăсăкланатăп вĕрентӳ ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тăвакан ентешрен.**

«Йăнтăрчă шкулĕнче математикăпа Мария Егоровна вĕрентетчĕ. Питĕ сăпайлăччĕ, тыткаларăшĕпе те питĕ килĕшетчĕ. Кашни ача патнех çул пурччĕ унăн, чунне парса ĕçлетчĕ. Çĕнĕ темăна хăйĕн чĕлхипе ăнланмалла уçса паратчĕ. Контрольнăйсенче те, уроксенче те яланах «пиллĕкчĕ» манăн. Пурнăçри вырăна тупма шăпах Мария Егоровна Николаева пулăшрĕ те. Çавăнпа унăн çулĕпе кайма тĕллев лартрăм. Каярахпа вăл Тăвайри вăтам шкулта нумай çул математика вĕрентрĕ. Шкул дирекцийĕ ыйтнипе канăва тухсан та чылай вăй хучĕ юратнă ĕçĕнче. «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ» хисеплĕ ятпа хакларĕç унăн ĕçне. Паянхи кунччченех çыхăну тытатăп, тав тăватăп хамăн наставнике»,– чунне уçрĕ Елена Александровна.

## Ӳсĕмсен çулĕпе...

**Канашри педагогика училищинче, унтан И.Я.Яковлев ячĕллĕ педагогика институтĕнче ăс пухнă чухнехи опытлă преподавательсене те ырăпа аса илчĕ. Ĕç биографийĕн пирвайхи страници хăй вĕреннĕ Йăнтăрчă шкулĕнче çырăннă унăн. Унтан Канашри 10-мĕш шкулта математика вĕрентнĕ. Мăшăрне ĕçрен Шупашкара куçарнă хыççăн Елена Михайлова 24-мĕш шкулта ачасене пĕлӳ пама пуçланă.**

Сăмах майăн, мăшăрĕпе пĕр ялтанах, Тенеялĕнчен вĕсем. Михаил Георгиевич йĕркелĕх хуралĕн ĕçченĕ. Ял хуçалăх институтĕнче экономика факультетĕнче вĕреннĕ хыççăн Чулхулари МВД академийĕн Шупашкарти филиалĕнче пĕлĕвне ӳстернĕ. Юстици полковникĕ, Чăваш Енри транспортпа лини пайĕн начальникĕн çумĕ – çак ĕç тытăмĕнчи следстви уйрăмĕн начальникĕ. Чăваш Республикин хисеплĕ юрисчĕ.

Каярах ĕç çулĕ пултаруллă педагога 44-мĕш лицея илсе çитернĕ. 44 çултан 18 çулне лицеистсене математика вĕрентет вăл. Унăн 200 ытла вĕренекенĕ тĕрлĕ шайри олимпиадăсенче, конкурссенче çĕнтернĕ. Раççейри аслă шкулсене вĕренме кĕрессипе малтисен йышĕнче. Республикăри лицейсем хушшинче те чи пултаруллисем. Çакăнта Елена Александровнан тӳпи пысăк. Вăл икĕ хутчен республикăри математикăпа информатика вĕрентекенсен методика фестивалĕн, класс ертӳçисен конкурсĕн «Опыт и мастерство» номинаци призерĕ пулнă. Пĕтĕм Раççейри учительсен конкурсĕнче çĕнтернĕ.

«Вăл пирĕн класлă класс ертӳçи»,– тесе те ахальтен каламаççĕ пулĕ Е.А.Михайлова çинчен воспитанникĕсем. Унăн юлашки, 2022 çулхи, кăларăмнех илер-ха. 26 ачаран 20-шĕ ылтăн медальпе пĕтернĕ. Пĕрлехи патшалăх экзаменĕнче (ППЭ) 70 балран кая мар пухнă. Лицейри 4 вĕренекенĕн 100 балл пулнă, вĕсенчен виççĕшĕн математика предмечĕпе. Унăн вĕренекенĕсем Раççейри аслă шкулсенче пĕлĕвне тарăнлатаççĕ. А.Петриковпа Ю.Заимова Мускаври университетсен преподавателĕсем. Нумайăшĕ – ăслăлăх ĕçченĕсем. Наукăпа тĕпчев институчĕсен сотрудникĕсем, тĕрлĕ ĕç сферинчи предприяти ертӳçисем.

Халĕ вăл лицейри 6-мĕш классен ертӳçи. Тĕрлĕ енлĕ аталанма çул уçать вĕсене. Вĕренӳре маттуррисемпе Мускавра пулнă. Вĕренекенсем Чăваш патшалăх университечĕн «Кĕçĕн физмат шкулне» çӳресе пĕлĕве анлăлатаççĕ. «Сириус» центрта, «Артекра» ăсталăха ӳстереççĕ. Çакна та палăртас килет, Елена Александровнан класĕн- чи нумай ача Чăваш Ен Пуçлăхĕн стипендиачĕсем.

Ӳсĕмсен çăлкуçĕ пирки сăмах пуçарсан çапла хушса хучĕ: «Нимĕнле вăрттăнлăх та çук. Ачасемпе тата ашшĕ-амăшĕпе тачă çыхăну тытатăп. Коллективпа та, ĕçтешсемпе те килĕштерсе ĕçлетĕп. Каникулта та тĕл пулатăп пĕлӳ патне туртăнакансемпе, заданисем паратăп. Олимпиадăсенче тĕл пулакан задачăсене шĕкĕлчетпĕр. Унсăрăн епле-ха экзаменра 100 балл пухчăр?»



Михаил Мишустин чысланă самант

## Чăваш Ен Пуçлăхĕ те саламланă

**Ĕçне кура – хисепĕ, тенĕ пек, тĕрлĕ сумлă наградăсем Елена Александровнан. Виçĕ çул каялла учитель кунĕнче Правительство наградине Михаил Мишустин пани паян та куçĕ умĕнче. «Математика манăн юратнă предметчĕ»,– тенĕ Раççей Федерацийĕн Хисеп грамотине илнĕ ятпа саламланă май. Вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче нумай çул вăй хунăшăн тата ĕçри пысăк ӳсĕмсемшĕн Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев Елена Александровна ячĕпе правительство телеграмми янă ун чухне, пысăк наградăна тивĕçнĕ ятпа саламланă.**

Шăпах çак чыслав хыççăн Елена Михайлован шкулта пĕрле вĕреннĕ çывăх юлташĕ, паянхи кунччченех унпа туслă Альбина Николаевна Семенова, тĕнчипех паллă биатлонисткăн Татьяна Акимован амăшĕ, шăнкăравланăччĕ: «Тăвайсен пĕлмеллех хăйсен мухтавлă хĕрĕ çинчен. Эпир 4-8 классенче пĕрле вĕреннĕ. Тенеялĕнчен пирĕн Йăнтăрчă шкулне темиçе çухрăм çурран утатчĕç пĕр класри Галя Бадерякова, Наташа Егорова, Лена Арсентьева (хĕр чухнехи хушамачĕ). Асар-писер çилтăман-и, çапса çумăр çăвать-и – пĕр кун та сиктерместчĕç. «Паян сирĕн пата юлма юлать-и?»–тетчĕç питĕ япăх çанталăк чухне. Шăллăм хăйĕн юлташĕсене илсе кĕретчĕ, вĕсенчен Толя Толкова астăватăп. Хамăрăн та çемье пĕчĕкех марччĕ. Аттепе анне пĕр сăмах та каламан. Пĕр пысăк чукун кăмака яшки пурин валли те çитетчĕ. Вĕренесшĕн, пĕлӳ илессишĕн çуннă эпир. Лена вара математикăпа пуринчен те вăйличчĕ. Пĕрле уроксене хатĕрленеттĕмĕр. Пулăшатчĕ вăйсăртараххисене. Ун чухнех учитель пахалăхĕсене курattăмăрччĕ унра. Турăран – вĕрентекен вăл,– тесе каланă пулăттăм ун пирки. Питĕ тăрăшуллăччĕ, ăс-тăнне аталантарса çавăн пек пысăк хисеплĕ, тава тивĕçлĕ учитель пулса тăчĕ. Мухтанатпăр унпа. Ырă та таса чун-чĕреллĕ кил-йышра телейлĕ ачасем çитĕнчĕç ав...»

Михаил Георгиевичпа Елена Александровнан 3 хĕрĕ те хăйсене килĕшекен професси суйланă. Ашшĕпе амăшне ырă ĕçĕсемпе савăнтараççĕ. Кристина – юрист, Татьяна – экономист, Анастасия врач-онколог-хирург. Мăнукĕ юратнă кукамăшĕ ĕçлекен 44-мĕш лицейра пĕлӳ пухать. Икĕ хĕрĕ Мускавра ĕçлесе пурăнаççĕ.

**Раиса ШУМОВА**

# Кил вучахне сӳнтермен

**Ашшĕ-амăшĕн кил вучахне сӳнтермен. Кашни канмаллинче Тенеялне васкаççĕ Михайловсем. Кил-çуртне пăсмасăр хальхилле юсаса хăт кĕртнĕ. Кӳршисемпе туслă, ял пурнăçĕнчен айккинче тăмаççĕ.**

Надежда Анисимова Елена Александровнан ĕçченлĕхне, сатурлăхне палăртрĕ. Пахчи тĕрлĕ çимĕçрен пуян. Пĕтĕмпех хăйсем туса илеççĕ. «Чунĕпе ырă,– терĕ Йăнтăрчă шкулĕнче хăйне вĕрентнĕ учитель çинчен Ирина Михайлова (Хайдукова). – Вăл вĕрентни, ăс пани паян нумайăшне ĕçре пулăшса пырать. Çирĕп кăмăл-туйăмлă пулни, ĕçе чунтан юратни, мĕн палăртнине вĕçне çитерме ăнтăлни – çак пахалăхсемпе те çыхăннă пулĕ ӳсĕмсен çăлкуçĕ».

Çывăх тăванĕсем яланах пĕрле вĕсемпе. Шăллĕ, Николай Александрович, Афганистанра пулнă, Хĕрлĕ Çăлтăр ордена тивĕçнĕ. Канашри уголовлă шырав органĕн начальникĕнче ĕçлесе канăва тухнă. Тепĕр пĕр тăванĕ, Юрий Александрович, мĕн пенсие тухиччен МЧС тытăмĕнче вăй хунă. Кирлĕ вăхăтра вара яланах пĕр-пĕрне пулăшу аллине тăсма хатĕр вĕсем.

«Çемьери, тăванлăхри килĕшӳпе пĕрлĕхрен хакли çук пулĕ. Тăван тăрăха килсен Тăвай çăкăрне туянмасăр каймастăп. Кăпăш та тутлă шăршăллăскер ачаллăха çитерет. Атте-анне çурчĕ чуна ăшăтать. Мăшăрăн çуралнă килне те пăхса тăратпăр, юхăнтармастпăр»,– терĕ Елена Александровна.

**Раиса ШУМОВА**




*Кăçал Чăваш Енĕн тĕп хули 555 çул çитнине халалласа Шупашкар хула администрацийĕ «Созидатели города» проект хута янă. 150 чăрăну павильонĕнче республикăн тĕп хулине аталантарассишĕн пысăк тӳпе хывнă çынсен сăн ӳкерчĕкĕсене вырнаçтарнă.*

*Бауман урамĕнчи баннер çинче 44-мĕш лицейра математика вĕрентекен, РФ тава тивĕçлĕ учителĕн, Тăвай енĕн мухтавлă ентешĕн Елена Александровна Михайловăн сăн ӳкерчĕкĕ.*

# Сакăр медаль çĕнсе илнĕ

**Шупашкарта чӳк уйăхĕн 8–10-мĕшĕсенче шашкăлла выляссипе республикăра мала тухассишĕн ăмăртусем иртнĕ. Тăвайри ача-пăчапа çамрăксен центрĕн воспитанникĕсем округ чысне ăнăçлă хӳтĕленĕ, 8 медаль çĕнсе илнĕ. Нумайăшĕ Чăваш Ен чемпионĕсемпе призерĕсем пулса тăнă.**

Совет Союзĕн Геройĕ П.Х.Бухтулов ячĕллĕ Тăвайри вăтам шкул учителĕсем хăйсен вĕренекенсемшĕн мĕнле савăнмĕç-ха? Уйрăмах Виктория Ивановапа Дарья Кондратьевашăн. Виктория иккĕмĕш хут Чăваш Ен чемпионĕн ятне, ылтăн медаль çĕнсе илчĕ. Иккĕмĕш вырăна Дарья тухрĕ. Сăмах май, В.Иванован пухмачĕнче кĕмĕл медаль те пур. Д.Кондратьева икĕ хутчен республика чемпионĕ пулнă.

Леонид Васильевпа Павел Илларионов Чăваш Ен чемпионĕсене парăнтарма пултарчĕç. Шел те, чемпионата пирĕн вăйлă шашистсем – пĕртăван Леонидпа Егор Филипповсем, Кирилл Михайлов хутшăнаймарĕç. Кулянма кирлĕ мар, умра нумай интереслĕ турнир кĕтет: «Асамлă шашка», ЧР шашка чемпионачĕ, шахматпа «Шурă ладья»...

**Владислав ПАСТУХОВ педагог, спорт мастерĕн кандидачĕ**




ЧР чемпионĕ Виктория Ивановапа Дарья Кондратьева кĕмĕл призерсем

ЧӲК УЙĂХĔН 18-МĔШĔ – ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПИРУС ТУРТАССИНЧЕН ПĂРĂНМАЛЛИ КУН

# Киревсĕр йăлапа ан туслашăр



**Пирус туртнипе чĕрепе ишеми чирĕ тата тип пырпа трахея ракĕ пуçланаççĕ, пуç мимин юн тымарĕсем аптăраççĕ. Пирус наркăмăшĕ – никотин. Сывлăша сĕрĕмлекенсене врачсем пĕр кун та пулин пирус туртассинчен пăрăнма сĕнеççĕ.**

Пирус туртмасăр пурăнаймanни чи анлă сарăлнă эпидемисенчен пĕри, алкоголизмпа, наркоманипе пĕр ретре тăрать вăл. Сакăр сехет пирус туртмасан юнри кислород нормăна ларать. 48 сехетрен çыннăн шăршăпа тутине туясси аваналанать. Пĕр эрнерен вара – пит тĕсĕ лайăхланать. Пĕр уйăх алла пирус тытмасан, сывлама çăмăлланать, ывăнасси иртет, пуç ыратма пăрахать. Çулталăкран чĕре ишеми чирĕпе вилесси сахалланать, пилĕк çултан ӳпке е карланă ракĕпе аптăрасси икĕ хут чакать.

Сывлăша пируспа сĕрĕмлесен организм сиенленет, чирлеттерет, пурнăçран уйăрать.

**Татьяна ИГНАТЬЕВА, врач-нарколог**

САНĂН ÇЫННУСЕМ, ТĂВАЙ ЕН

# Вăхăт темле сурана та сиплет...

**2024 çул иртсе пырать. Декабрь уйăхĕн виççĕмĕшĕнче Чăваш обществăпа культура центрĕ çумĕнчи Эмине премии ячĕллĕ «Çĕнĕ чăваш пикисем» («Новые чувашские сударушки») ансамбль ертӳçи Марина Федоровна Ильичева-Шуракăш кĕтмен çĕртен пурнăçран уйрăлса кайни икĕ çул çитет. Питĕ шел...**

Çакă «Çĕнĕ чăваш пикисем» ушкăна кăна мар, Наци библиотекинче ĕçлекенсене те питĕ пăшăрхантарчĕ, хурлантарчĕ. Кăçал М.Ильичева-Шуракăш йĕркеленĕ çак ансамбль 20 çул тултарчĕ. Юбилейлă уяв концерчĕсем иртттерессе ĕмĕтленсе пурăнаттăмăр...

Марина Федоровна пултарулă ертсе пынипе «Çĕнĕ чăваш пикисем» ансамбль Наци библиотекин ĕçченĕсемпе чăваш культурине аталантарас тĕлĕшпе ырми-канми питĕ тачă ĕçлерĕ. Библиотека ĕçченĕсем иртттерекен пултарулăх каçĕсенче концертсемпе куракансене савăнтарчĕ.

Çакна май кĕскен Марина Ильичева-Шуракăш çинчен те каласа хăварас килет. Вăл Элĕк районĕнчи Прашкушкăнь ялĕнче çуралнă. Мускавра вĕреннĕ. 35 çул ытла Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче хорта юрланă. Пултаруллă композитор, артист, юрăç, ЧР композиторсен Ассоциацийĕн, çыравçăсен Союзĕн, Раççей Федерацийĕн театр деятелĕсен Союзĕн, Чăваш обществăпа культура центрĕн членĕ пулнă. Культура тытăмĕнче çур ĕмĕр вăй хунă.



Паллах, çитĕнӳсем, творчество ĕçĕнчи пултарулăхĕ ансамбль ертӳçин çумĕ Владимир Васильевич Васильев пулăшмасăр пулман. Вĕсем пĕр-пĕрине алла-аллăн тытăнса, пĕр-пĕрне пулăшса ĕçлени курăнатчĕ. Ансамбль репертуарне ятарласа çырнă юрăсемпе пуянлатса пыратчĕç. Марина Федоровна вăхăтсăр вилнĕ хыççăн, юрăçсен ушкăнĕ тăлăха тăрса юлнă пекех туйрĕ. Юрлама юратакан ĕç ветеранĕсем Земфира Кузьминичнă Яковлева ертсе пыракан Наци библиотеки çумĕнчи «Эткер» ансамбле пĕрлешрĕç. В.В.Васильев та çак ушкăна хутшăнчĕ. Темле йывăр пулсан та алă усса лармарĕ. Сăвă-юрă пуххисем калăпларĕ. «Çĕнĕ чăваш пикисем» («Новые чувашские сударушки») ансамблĕн кашни юрăçине асăнмалăх çак ушкăн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен ӳкерчĕксен альбомне йĕркелесе парнелерĕ. Каярахпа пултарулăх шыравĕ ăна Трактор тăвакансен культура керменĕнчи «Парне» ятлă ансамбле илсе çитерчĕ. Çак ушкăнпа пĕрле 4 концерта хутшăнма, «Парне ушкăн гимне» çырса кĕвĕлеме те ĕлкĕрчĕ.

Владимир Васильев композитор нумай сăвă-юрă çырса кăларнă: 156 юрă, 16 кĕнеке. Паллă çыравçă Юрий Сементер, Юхма Мишши, Раиса Сарби сăввисемпе юрă кĕвĕлет. Чылай юррине хăйĕн сăввисемпе калăплать. Кĕнекисем Наци библиотекинче упранаççĕ.

Владимир Васильевич Васильев 1948 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче Тăвай районĕнчи Çĕнçырма ялĕнче çуралнă. Мĕн пĕчĕкренех ӳнер енне туртăннă. Çартан килсен ĕмĕтне пурнăçа кĕртсе Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищин дирижерсем хатĕрлекен уйрăмĕнче вĕреннĕ. Çав вăхăтрах Шупашкарти лента тĕртекен фабрикăра ĕçленĕ, кайран 27 çул Шупашкарти агрегат заводĕнче вăй хунă. «Ĕç ветеранĕ» сумлă ята тивĕçнĕ.

Владимир Васильев – Чăваш композиторĕсен Ассоциацийĕн сюзĕн, Чăваш писателĕсен союзĕн членĕ, Чăваш музыка обществин тава тивĕçлĕ деятелĕ. 2004 çулта – Алексей Талвир ячĕллĕ премии лауреачĕ, 2007 çулта Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕн ятне илнĕ.

В.Васильев пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕ: вăл юрăç та, сăвăç та, композитор та, ташăç та, кулăш ăсти те. Кирек ăçта ĕçлесен те, чун-чĕри илем тĕнчинех ăнтăлать. «Çĕр çинче ылтăн ан пухăр» тенĕ пек, В.Васильевшăн пуянлăх вăл – çынсене ырă ĕçсемпе савăнтарасси. Çак каларăшпа килĕшӳллĕн, пĕр çулхине вăл Наци библиотекинчи «Мерчен» хăна пӳлĕмне баян парнелерĕ. Хăй вĕреннĕ Элпуç шкулĕпе тачă çыхăну тытса, пичетрен тухнă кĕнекисене, пианино, аккардион, баян, купăс парнелесе унта ĕçлекенсене ача-пăчана вĕрентме пулăшу панă. Çитес уйăхра тăван шкула çитсе килме планланă. Пĕччен мар, Юхма Мишши çыравçăпа тĕлпулу иртттересшĕн Элпусĕнчи вăтам шкул ачисемпе.

Владимир Васильевичăн пултарулăх ĕçĕ малашне те ăнăçсах пытăр.

**Нина БЕЛЬСКАЯ, ĕç ветеранĕ. Шупашкар хули**

# Тăван тавралăха тĕпчесси аталансах пытăр

**Чăваш Енри таврапĕлӳçĕсен ушкăнĕн Тăвайри уйрăмĕн пайташĕсем çак эрнере Тушкил шкулне çитсе курчĕç. Кунти музей ертӳçи Валерий Петров учитель авалхи тата пирĕн вăхăтри япаласемпе, стендсемпе паллаштариччен умсăмахне ятарлă кĕтесре пуçларĕ.**

«Аваллăх управçине» 1985 çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче истори врентекен Михаил Александровичĕ Орлов пуçарулăхĕпе, вăл тăрăшнипе уçнă. Малалла музейри экспонатсене пуянлатма, унăн ĕçне аталантарма РСФСР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ В.Е.Ефимов, Л.А.Григорьева чуна парса тăрăшнă»,– терĕ паянхи кун çак пархатарлă ĕçе тăсакан Валерий Анатольевич. Музейпе çапла паллаштарма пуçлани тăван кĕтес историйĕпе кăсăкланакансене çав тери килĕшрĕ.

«Пĕр япала та пуçаруллă та маттур çынсăр пулмасть. Вĕсен ячĕсене манмалла мар. Эсир ку енĕпе ачасене те çапла вĕрентетĕр ĕнтĕ»,– пĕтĕмлетрĕ музей ертӳçин сăмахĕсене итленĕ хыççăн В.И.Саперов. Çĕршер кĕнеке, статья, аваллăх хучĕсене вуланă, хăйсем те кĕнеке çырнă çынсемшĕн, паллах, кашни стенд, кашни экспонат шухăшсем çуратать. Вĕсене юлташсемпе, «музей хуçипе» сӳтсе явас килет. Çавна май та нумай ыйту-хурав пулчĕ.

Округри таврапĕлӳçĕсем палăртнă кун йĕркипе килĕшӳллĕн 10, 11 классенче вĕренекен çамрăксемпе тĕл пулчĕç.

Уйрăм ертӳçи В.А.Александров таврапĕлӳçĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки, вĕсем пичетлесе кăларнă кĕнекесем, Тăвай ялĕ çумĕнче нумаях пулмасть авалхи çынсене пытарнă вырăнсене тĕпчени çинчен каласа кăтартрĕ.

«Музей – ылтăн çӳпçе»,– тесе Т.М.Анисимова Сăхăтпуçĕнчи шкул музейĕн ĕçĕ-хĕлĕ, унăн шăпи çинчен, Сăхăтпуç ялĕн историйĕ пирки тĕплĕн пĕлтерчĕ ачасене.

В.Г.Сидоров тăрмăшсем хăйсен ялĕ тата Лачкасси аваллăхне упрас енĕпе мĕнле ĕçсем туса пынипе паллаштарчĕ. 15 кĕнекерен пĕрне, Э.С.Ушаковпа пĕрле кăларнă «Тăрмăш ял тăрăхĕн энциклопедине» шкула парнелерĕ. Ачасене йăх тымарне мĕнлерех тĕпчесе тумаллипе паллаштарчĕ. Ку тĕлĕшпе çамрăк чухнех тимлеме сĕнӳ пачĕ.

П.В.Винников Сăхăтпуç таврашĕнчи мĕнпур вырăна тĕпчесе пĕлнине каласа кăтартсан, ачасем чăннипех тĕлĕнчĕç.

В.Я.Шакров çамрăксене тавралăха тĕпчеме юханшыв, кӳлĕ, çăл, çырма, çул, шурлăх, вăрман, урам тата ытти вырăнсен ячĕсен пĕлтерĕшне, мĕнле çуралнине тупса палăртнинчен пуçлама сĕнчĕ. Аслă ӳсĕмри çынсенчен вăхăтра ыйтса юлмалла. Топонимипе çыхăннă ятсем, шел пулин те, манăçа тухаççĕ, вĕсен историйĕсене хут çинче çырса хăвармаллах.

«Тăван çĕршыва чунтан юратма, ăна парăннă чăн-чăн гражданин пулма вĕрентесси çуралнă, ӳссе çитĕннĕ кĕтесе хисеплеме, унăн историне, унăн çыннисене пĕлме хăнăхтарнинчен нумай килет»,– тесе пĕтĕмлетрĕç калаçăва тăван тавралăха тĕпчекенсем.

Виççĕмĕш пайĕ те пулчĕ кун йĕркинче. Павел Винников хăй çуралса ӳснĕ Сăхăтпуç ялĕн историйĕпе мĕн ачаранах кăсăкланать. Вăл пухăннисене ялăн аваллăхпа çыхăннă таврари вырăнсене кăтартрĕ, вĕсен асамлăхĕ пирки те палăртрĕ. Ялтан тухнă паллă çынсен интереслĕ кун-çулĕ çинчен те темĕн те пĕлет ӳркенмен тĕпчевçĕ. Унăн тепĕр юратнă тĕпчев ĕçĕ – аваллăхпа çыхăннă япаласем пуçтарасси.

Хăнасем Тушкил шкулĕн директорне Е.С.Емельяновăна, унăн заместительне А.А.Кузьминана тата музей ертӳçине В.А.Петрова таврапĕлӳçĕсен ларăвне усăллă та тухăçлă ирттерме майсем туса панăшăн чĕререн тав тăваççĕ. Малашне те хастар ĕçлеме вăй-хал сунаççĕ.

**Владимир ШАКРОВ,**
**Чăваш наци ăслăлăхпа ӳнер академийĕн хисеплĕ таврапĕлӳçи**



# Тавах, чăваш театрне!

**А.С.Артемьев «Саламби» повеçе 70 çул каялла çырнă. Ун тăрăх хатĕрленĕ пĕрремĕш спектакль 1988 çулта К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕнче кун çути курнă. Кăçалхи октябрĕн 27-мĕшĕнче çак спектаклĕн çĕнĕлле варианчĕпе паллашма тӳр килчĕ. Театрта халăх нумайăн савăнтарчĕ.**

Унти ĕçсем ĕлĕкхилле мар, паянхи пурнăçра пулса иртнĕн туйăнаççĕ. Кунта веçех çĕнĕлле: вĕçрен куçакан декораци, артистсен пысăк йышĕ, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, тĕрлĕ самантăн чуна тыткăнлакан кĕвви-юрри, ташши, кашни выляканăн хусканăвĕ, тыткаларăшĕ... Пурин çине те куç илмесĕр пăхса, пĕр самахне сиктермесĕр итлесе ларатăн. Икĕ чун, пĕр-пĕрне юратакансем, Саламби Акрамовапа Анатолий Алмазов асапланни, вĕсен каласа çитереймен сăмахĕсем куракана шухăшлаттараççĕ, тарăн шухăша яраççĕ. Анна Цветковапа Арсентий Димитриев артистсем тĕп рольте выляса юрату йывăрлăха çĕнтернине кăтартса параççĕ. Артистсем ăста выляççĕ, кураканăн чун илемне пуянлатаççĕ.

Тавах чăваш театрне, вăл пурришĕн, çулсерен çĕнелсе пынишĕн.

107-мĕш сезонти спектакльсем те куракансене савăнтарччăр.

***Людмила МИХАЙЛОВА,***
***Чутей ялĕ***

# Кăсăясем – пирĕн туссем

**Чӳк уйăхĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çĕршывра «Кăсая кунне» паллă тăваççĕ. Мĕншĕн çакăн пек калаççĕ-ха? Мĕншĕн тесен халăхра «кăсăяна Турă кайăкĕ» тенĕ. Халăхра сăнанă тăрăх, кăсăясем кĕçех сивĕсем килессе сиссе шăпах ку вăхăт тĕлне вăрмантан çынсен çывăхне вĕçсе килнĕ, вĕсенчен пулăшу кĕтнĕ.**

Тăвайри 2-мĕш номерлĕ ача садне çӳрекен ачасем те кайăксене хĕллехи вăхăтра пулăшу парас пирки пухăнса калаçрĕç. Малтанах вĕсем кунти тĕрлĕ кăсăясемпе паллашрĕç, пирĕн тăрăхра хĕл каçакан ытти кайăксене те аса илчĕç, тĕрлĕ тĕслĕ хутран касса çыпăçтарса «кăсăясем килсе çитрĕç» ӳкерчĕк турĕç. Унтан ачасем Анастасия Муханова воспитательпе пĕрле кайăксем валли сырăш ăсталаса ача сачĕн территорине çакса хучĕç, тĕрлĕ апат хурса пачĕç. «Хăнасем» кĕттермерĕç, часах сырăш çине вĕçсе пырса ларчĕç, туслăн апатланма тытăнчĕç. Кусем шăпах кăсăясем пулчĕç. Çапла вара ачасем пулăшнипе вĕсем хĕл ăнăçлă каçĕç, сивĕрен те хăрамĕç.

**Анастасия МУХАНОВА,**
**Тăвайри 2-мĕш номерлĕ ача сачĕ**



СЫВЛĂХ

# Утни – сывлăха

**Анастасия Фомичева кардиолог каласа панă тăрăх, регулярлă вăй-хал активлăхĕ 50 çул урлă каçнă çынна уйрăмах кирлĕ. Çакă чĕре сывлăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.**



Специалист çавна палăртнă. Утни, спортпа туслă пулни тата тĕрлĕрен вăй-хал ĕçĕ-хĕлĕ çынсене хăйсен чĕрин сывлăхне лайăхрах сыхласа хăварма май параççĕ. Вăй-хал активлăхĕ регулярлă пулни, мышцăсене нагрузка лекни, врач шутланă тăрăх, ватлăх çулĕсенчи чĕрене питех те кирлĕ.

Уйрăммăн илес пулсан, 50 çул урлă каçнă хыççăн чĕре сывлăхĕ валли утни, вăраххăн чупни, шывра ишни, велосипедпа ярăнни тата аэроблă ытти йышши нагрузка пулни лайăх.

«Кашни эрнерех 5 кунран кая мар кунсерен 30–60 минут утма, ишме, велосипедпа ярăнма тăрăшмалла. Пĕлтерĕшли – ытларах куçса çӳремелле, ларса ирттерекен вăхăта чакармалла. Уçă сывлăшра уçăлса çӳрессине те манăçа кăлармa кирлĕ мар»,– каласа панă врач.

Кунсăр пуçне çакна та асăннă. Чĕре ĕçĕ çине çаван пекех вăтаçĕр тинĕс диети лайăх витĕм кӳрет. Ӳсен-тăран продукчĕсем, çуллă пулă, олива çăвĕ ытларах çиме тăрăшмалла. Рационри тăвара тата ансат углеводсене вара чакарас пулать.

Кунпа пĕрлех пирус туртманни те пĕлтерĕшлĕ самант пулать.

«Стресс лару-тăрăвне тĕрĕс чăтса ирттерме хăнăхмалла. Ĕçленĕ хыççăн обязательнăй майпа канас пулать е урăх ĕç-хĕл çине куçмалла. Ыйхă талăкра 7 сехетрен кая мар пулмалла: организма хăйĕн ресурсĕсене çĕнетме вăхăт кирлĕ»,– хушса каланă кардиолог.

ХĔЛЕ ХАТĔРЛЕНСЕ

# Йӳçĕтнĕ купăста

**1 пуç купăста, 2 кишĕр, 2 литр шыв, 3 апат кашăкĕ тăвар, 2 апат кашăкĕ сахăр, техĕмлĕ çимĕçсем кирлĕ.**



Купăстана вĕтĕ те, пысăк касăксемпе те турама юрать. Кишĕре шултра теркăпа хырмалла. Унтан вĕсене пĕрле хутăштарса лайăх пăтратмалла, банкăсене пусарса тултармалла, икĕ литр шывран тата виçĕ апат кашăкĕ тăвартан вĕретсе сивĕтнĕ хутăша хĕррипе тан тумалла. Банкăсене тарăн савăта лартмалла, хупламасăр икĕ талăк тытмалла. Хушăран вăрăм çĕçĕпе усă курса купăстана тĕпне çити шăтармалла. Çапла майпа сывлăша кăлармасан купăста йӳçĕ пулать.

Виççĕмĕш кунне купăста сĕткенне юхтарса илмелле. 2 апат кашăкĕ сахăр ирĕлтернĕ хыççăн каялла банкăна ямалла, хупласа холодильнике лартмалла. Пĕр талăкран çиме юрăхлă пулать.

Çаван пекех горчица, кориандр, тмин, укроп вăрри, панулми касăкĕсем, палан, пилеш, хĕрлĕ тата хура хурлăхан хушма юрать.

ПĔЛМЕ



• Хăш-пĕр чух пĕçернĕ çăмарта сарри тавра кăвак йĕр пулать. Вăл ан пултăр тесен çăмартана 5 минут вĕретмелле, тепĕр 10 минут вĕри шыврах тытмалла.
• Хытă сыра 7-10, çемçине 2-3 кун упрама пулать.
• Типнĕ сыра сĕтре тытсан çемçелет.
• Тăварлă шывра йĕпетнĕ татăкпа чĕркесен, сыр час пăсăлмĕ.
• Сыр хĕвеле юратмасть.

## Ăшшăн саламлатпăр

Кармалти куллен кирлĕ таварсен магазин сутуçине **Светлана Алексеевна Димитриевана** ноябрĕн 19-мĕшĕнчи 55 çулхи юбилейĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çулталăк каялла кăна пуçăннă-ха вăл суту-илӳ ĕçне. Çынсем кăмăллă унăн ĕçĕпе, мĕн ыйтнине вăхăтра тивĕçтерме тăрăшать. Малашне те ĕçӳсем ăнăçсах пычччăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсене пурнăçлама ырлăх-сывлăх, кашни кунпа савăнма хавас кăмăл-туйăм, иксĕлми вăй-хал сунатпăр.

Хамăрăн ĕç ветеранне, Тăвайра пурăнакан **Светлана Михайловна Григорьевана** ноябрĕн 20-мĕшĕнчи 60 çулхи юбилейĕпе чи ырă туйăмсемпе саламлатпăр. Вăл нумай çул çăкăр заводĕнче тирпейлĕхшĕн тăрăшнă. Хастарлăхĕшĕн чылай Хисеп хутне тивĕç пулнă.

Санри кăмăл пуянлăхĕ, ĕçченлĕхӳ нихăçан та ан иксĕлтĕр. Пурнăç çулĕпе хавхаланса утма çирĕп сывлăх, çăлкуç таппиллĕ вăй-хал сунатпăр.

**«Тăвайри кооператив» потребобщество**

# Хĕрарăм-трактористсен паттăрлăхне упрар

**Пирĕн округра та, ытти çĕрти пекех, хĕрарăм-трактористсем чылайăн пулнă хăй вăхăтĕнче. Вĕсем МТС бригадисенче, кайран колхоз-совхозсенче те ырми-канми ĕçленĕ, суха тунă, тырă акнă, тракторпа ытти ĕçсенче вăй хунă, пысăк кăтартусем тунă. Вĕсен хастарлăхĕ манăçми.**

Çакна май культурăн «Трактор историйĕн наукăпа техника музейĕ» частнăй учрежденийĕ Чăваш Ен Культура министерствин тата республикăри «Чăваш Енри хĕрарăмсен Союзĕ» обществăлла организацийĕ пулăшнипе хамăр республикăри хĕрарăм-трактористсем пирки даннăйсем пухма пуçлани çинчен пĕлтерет. Акци пынă май аса илӳсене, çырусене, дневниксене, фотографисене, справкăсене, ытти информаци материалĕсене пĕрле пухса паттăр трактористкăсем çинчен хайнеевĕр кĕнеке туса хатĕрлеме палăртнă. Акци тĕллевĕ – Чăваш Ен пурнăçĕпе экономикине пысăк тӳпе хывнă хĕрарăмсен ĕçри паттăрлăхĕ çинчен каласа паракан историе ăрусен асĕнче упраса усрасси. Материалсене 2024 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕччен электронлă майпа (a.n.sergeev@ktz.group) е почта урлă çак адреспа – 428024, Россия, Чувашская Республика, г.Чебоксары, пр.Мира, д.1, кор. 2 – ярса памалла. Тăвайри архив учрежденийĕ урлă та çитерме пулать. Хĕрарăм-трактористкăсем çинчен кам мĕнпе пулăшма пултарать – пулăшма ыйтатпăр.

**Алина ТИТОВА, Тăвай муниципалитет округĕн архив ĕçĕсен заведующийĕ**

## Кĕр уявĕнче савăннă

**Кĕркуннен юлашки уйăхне кĕтĕмĕр. Çак вăхăтăн илемĕпе киленсе хамăр тăрăхри тĕрлĕ вырансенче пултăмăр кăçал. Мĕн курнине, асра юлнине музыка залĕнчи уявра кăтартрĕç «Асамат кĕперĕ» ача садĕнчи «Вишенки» аслă тата шкула кайма хатĕрленекен «Юнга» ушкăнсенчи шăпăрлансем.**

Тулта тĕтреллĕ те сивĕ. Йĕпе юр çăвать е шăнтса ирĕлтерет. Чӳк уйăхĕ сивĕ хĕле алă пама васкамасть та тейĕн. Уяв пӳлĕмĕ вара ылтăн кĕркуннене аса илтерет. Тĕрлĕ тĕслĕ çулçăсемпе илемлетнĕ. Ăшă та хĭтлă кунта. Тинех кĕтсе илчĕç ачасем Кĕркуннене. Вăл пушă алăпа мар, кучченеçсем илсе килнĕ, карçынкка тулли панулми. Ачасен сăн-пичĕ çуталчĕ. Пĕрле юрăсем юрларĕç, ташларĕç, хаваслă вăйăсем выляреç. Тулăх кĕр çинчен сăвă та нумай пĕлеççĕ иккен вĕсем! Юлашкинчен тупмалли юмахсен тупсăмĕсене пĕрле тупрĕç.

**Ольга СИДОРОВА, Анна ФЕДОРОВА, «Асамат кĕперĕ» ача сачĕ**

**Памятные даты истории РОССИИ**

**15 ноября** – Всероссийский день призывника
День создания подразделений по борьбе с организованной преступностью
**19 ноября** – День ракетных войск и артиллерии

## БЛАГОДАРНОСТЬ



Выражаем огромную благодарность за моральную поддержку и материальную помощь нашим семьям в организации похорон безвременно ушедшего мужа, отца, сына, брата, участника СВО **Хайдукова Алексея Евмениевича:** заместителю Государственной ветеринарной службы по Чувашской Республике Корнилову Е.А., депутату Государственного Совета Чувашской Республики Пронину Л.А., настоятелю храма Архангела с.Янтиково протоирею Георгию, главе администрации Янтиковского муниципального округа Ломоносову О.А., заместителю главы администрации муниципального округа Михайловой И.А., военному комиссару г.Канаш, Канашского и Янтиковского районов Семенову Е.С. и Сорокину В.Н., активисту Янтиковского муниципального округа Буинцеву Эдуарду Юрьевичу, коллективу учителей и учащихся МБОУ Янтиковской СОШ, начальнику Индырчского территориального отдела Карсакову А.Ф., сослуживцам, жителям деревни Индырчи и Янтиковского муниципального округа, двоюродным сестрам, братьям, дядям, тетям, одноклассникам, друзьям, соседям и знакомым. Всем, кто пришел провожать Алексея в последний путь.

Спасибо всем за поддержку и низкий вам поклон.

Светлая память об Алексее навсегда сохранится в наших сердцах.

**Родные и близкие Хайдукова А.Е.** 1358

## ТАВ ТĂВАТПĂР



Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăр – юратнă мăшăр, атте, асатте, кукаçи, мăн кукаçи, хисеплĕ тăванăмăр, Тăвай ялĕнче пурăннă **Сергей Яковлевич Иеронов** пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Вăл нумай çул Тăвайри «МСО» предприятире сварщикра ĕçленĕ. Ăста та пултаруллă специалист хастарлăхĕшĕн нумай наградăна тивĕçнĕ. Сăпайлă та ĕçчен, тӳрĕ кăмăллăччĕ. Çемьешĕн яланах шанчăклă хӳтлĕх те тĕрек пулнă.

Йывăр хуйха пирĕнпе пайланă, çывăх çыннăмăра пытарма пулăшнă мĕнпур тăвана, кӳршĕсене, ял-йыша, унăн тата хамăрăн юлташсене, Тăвай чиркĕвĕн настоятельне Георгий аттене, унпа сывпуллашма пынă мĕнпур çынна чĕререн тав сăмахĕ калатпăр. Чир-чĕр, хуйхă-суйхă сирĕнтен яланах пăрăнса иртчĕр, сывлăхлă та вăрăм ĕмĕрлĕ пулăр. Турă пулăшса пытăр сире.

Сергей Яковлевичăн çутă та ырă сăнарĕ яланах пирĕн асăмăрта упранĕ.

**Мăшăрĕ, ачисен тата пĕр тăванĕсен çемйисем.** 1384

## ПĔЛТЕРӲСЕМ


1073 ТЕПЛИЦЫ. Т. 8-9871294822 12-10

0694 КУП. коз, овец, бычков. Т. 8-9278508564 25-18

1191 ПРОДАЮ поросят. Дост. Т. 8-9278560135 6-4

0217 ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Т. 8-9876617161 35-27

1371 ПРОДАЕТСЯ коза Зааненская, 1 окот в январе. Т. 8-9220582125

1283 Ремонт холодильников и стиральных машин. Т. 8-9279955504 3-2

1000 Требуются разнорабочие в Москву. З/п от 100 тыс. р. Т. 8-9373882555 22-14

202 Вахта 20 дней. Разнорабочие на завод г.Владимир, проживание и 3-х разовое питание бесплатно, з/п 60500 руб. Т. 8-9603078442 2-1

202 Вахта 15 дней, Казань, рабочие на сортировку мусора, проживание и 2-х разовое питание бесплатно, з/п 37500 руб. в последний день вахты. Т. 8-9603078442 2-1

1372 НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ. Т. 8-9279985488. Володя. 11-1

1228 ОБУЧЕНИЕ и прием на работу мастером по обрезке копыт КРС. Т. 8-9603011135 3-3

0990 КУПЛЮ бычков, коров, телок, вынужд. забой. Дорого. Т. 8-9370160057 20-14

1274 ОКНА ПВХ под ключ от производ. за кор. сроки. Замер. Гарантия. Скидки. Монтаж по ГОСТу Т. 8-9603031551 8-2

В автовокзал с. Янтиково требуется кассир. От 20 т.р./мес. на руки. Т. 8-9697599004 4-1

1187 Закупаем молочных ягнят, козлят от 2-3 месяцев, а так же молочных телят от 1-2 месяцев Т. 8-9093033504 8-9953423107 5-4

202 Вахта 15 дней, Солнечногорск МО рабочие на сортировку мусора, проживание и 3-х разовое питание бесплатно, з/п 39000 руб. в последний день вахты. Т. 8-9603078442 2-1


«Тăвайри кооператив» потребобщество Чутейри куллен кирлĕ таварсен магазин сутуçин Валентина Николаевна Мясникован ашшĕ тата Надежда Витальевна Юркина çăкăр пĕçерекенĕн хуняшшĕ

**Николай Филиппович ЮРКИН**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйисемпе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Тушкилти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ хăй вăхăтĕнче нумай çул техслужащире ĕçленĕ

**Галина Варфоломеевна МОРЯКОВА**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


"Ял ĕçченĕ" ("Сельский труженик")
Тĕп редактор А.Е.ЕГОРОВА

Учредительсем – Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Ен цифра аталанăвĕпе информаци политикин министерствин «Тăвай районĕн «Ял ĕçченĕ» хаçат редакцийĕ» ХТУ

Хаçата çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмне тĕрĕслесе тăракан федераллă службăн Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри Управленийĕ 2012 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00239 №-пе регистрациленĕ.

Хаçат эрнере 1 хут (эрнекун) чăвашла (хăш-пĕр материалсем вырăсла) тухать.
Пичете панă 14.11.2024 ç. 19.00, графикпе 19.00 сех.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ тата каялла тавăрса памаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн редакци явап тытмасть. Реклама материалĕсен палли – Р

Номершĕн яваплă дежурнăй И.И.ГЛАДКОВ
Компьютерпа калăплакан: Н.В.АЛЕКСАНДРОВА

Хаçата районти "Ял ĕçченĕ" хаçат редакцийĕнче наборласа версткăланă, "Чăваш Ен" ИПК" АУ типографийĕнче пичетленĕ. Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт.
Сырăнтару индексĕ – ПР 238. Калăпăшĕ – 1 пичет листи. Тираж – 1445. Заказ

Редакципе издатель адресĕ: 429290, Чăваш Республики, Тăвай ялĕ, Ленин проспекчĕ, 11-мĕш çурт.

Телефонсем: тĕп редактор – 2-11-10, обществăпа политика, экономика пурнăçĕн тата çырусен пайĕсем – 2-14-05, яваплă секретарь тата наборпа верстка пайĕ – 2-13-10, бухгалтери – 2-15-64. Электронлă почта: smi11@cap.ru